ТЕАТР

«СПЯЩАЯ КРАСАВИЦА» ТАКАМА ТА ВĂРАМĚ

М.Джалиль ячěллě тутар патшалăх академи операпа балет театрěнче иртнě эрнере виçě каç «Спящая красавица» (П.Чайковский) балет премьери пычě. 1959 çултанпа тěрлě редакцисемпе «Спящая красавица» темиçе хутчен те Хусан сцени çине тухнă. Хальхинче ăна М.Джалиль театрěн балетăн илемлěх ертÿçи, Раççейěн тата Тутарстанăн культурăн тава тивěçлě ěçченě Владимир Яковлев лартнă. Балетмейстер-постановщик пресс-конференцинче М.Петипа хореографине тěкěнмесěр, çав вăхăтрах самана, сцена условийěсем улшăннине шута илсе çěнěлěхсем кěртнине асăнчě.

Чăнах та, принцесса пÿрнине йěппе суранланмалла тăвакан Карабос Фея (Л.Мухаметгалиева) сăнарě йăлана хăрушă сăнлă çаврăнăçусăр карчăк пек кěрсе юлнă. Çěнě «Спящая красавица» çěнě Карабос Фейăпа паллаштарать пире: вăл ырă Сирени Фея (Е.Щеглова) пекех хитре, хуканăвěсемпе те илěртÿллě, Сирени Фея пекех чěвен тăрса ташлать... Анчах темле япшар пулсан та, усал усалах юлать. Çакна кěвěпе килěшÿллě пулса пыракан хуканусем аван кăтартаççě.

Тěп партисене, Дезире принц тата Аврора принцесса, А.Беловпа А.Суродеева ташларěç. Ăнăçлă дуэт тесе палăртмалла вěсене. А.Белова хусансем тахçантанпах пěлеççě, тивěçлипе хакласçě. 63-мěш сезон вěçěнче вăл Перьмре иртнě конкурсран мăшăрлă ташăра çěнтерÿçě пулса таврăнчě.

А.Суродееван иртнě октябрьте «Щелкунчик» (П.Чайковский) балетра Маша сăнарěпе Хусанти дебючě пулчě. Вунсакăр çулхи балеринăн пуласлăхě пысăкки куçкěрет — иртнě гастрольсенче ăна Тěнчери балет артисчěсен пěрлешÿллě театрне йыхравланă.

Хусан театрěн кордебалетне мухтанисене час-часах илтме тÿр килет. Хальхинче те массăллă сценăсем çав тери «таса», «каласуллă», хореографи училищинче вěренекен ачасем те сцена çинче çыпăçуллă курăнаççě.

Спектакль çинчен çырнă май декорацисемпе костюмсем пирки каламасăр хăвараймăн. «Спящая красавица» илемěшěн Киев ăстисем — Андрей Злобин художник-декораторпа Анна Ипатьева костюмсен ÿнерçи яваплă. Пěлтěр «Сказание о Йусуфе» (Л.Любовский) балета та вěсемех илемлетнě. Кăçал «Сказание о Йусуфе» балета Раççей патшалăх премине илме тăратнă. Хусансемпе Пысăк театрăн «Пиковая дама» балечě «кěрешěве тухать». Чи малтанах «Спящая красавица» балет илемлетěвěнче XIV Людовик тапхăрне анлăн палăртнă (ылтăн тěслě эрешсемпе пуянлатнă, куça шартармалăх шукăллěх таçта та хуçаланнă). Паянхи спектакль те йăлтăрялтăр «тумěпе» йăларан тухмасть, анчах çěнěлěхсем те çук мар. Тěслěхрен, йывăçкурăка кăшт кăна асăрхамалла сăнарсемпе (юмах юмахах ěнтě) анлăлатнă.

Пěтěмěшле илсен, «Спящая красавица» балетăн çěнě пурнăç пуçланчě темелле. Иккěленмелли çук, В.Яковлев спектаклěн ěмěрě вăрăм та асамлă пулě. Чапě М.Джалиль ячěллě театрăн балечě пулнă кашни çěршыва саланě.

Татьяна ВАСИЛЬЕВА.
Василий АЛЕКСАНДРОВ сăнÿкерчěкěсем.

КУШАК ХÿРИ

(Шÿтлě сăвă)

Ăçта ура пусать паян —
Унта лекет кушак хÿри.
«Ма эс çаплах тарăхтаран —
Тăсса хуран ăна юри?

Усал, кахал, чăн-чăн ухмах!
Татах ура айне кěрен!
Санах лекет хаяр сăмах:
Çилленчěк килнě эп ěçрен.

Иртен пулмарě ăнăçу:
Мана тустарчě ман хуçа.
Чунра халь те çав хирěçÿ,
Канма памасть вăл ман пуçа.

Килте хăйне ырри сахал:
Çÿретěн эс такăнтарса,
Куç умěнчен часрах çухал,
Атту ватăтăп ак тытса!»

Çапла йÿçтернě май хама
Туятăп чун çемçелнине,
Çак кушаках çупăрлама
Ман алăсем туртăннине.

Мана хăтарчě-им элле
Пулас хуртан çемçе хÿре?
Темччен тытаймăп эп çилле
Хуçа çине — сÿнет чěре.

Çумра кушак пулман пулсан
Хуçах юлатчě айăпра.
Çак хирěлÿ лăпланмасан
Мěн кěтмелли юлать вара...

Паян каллех — ăçта утам —
Хÿре лекет ура айне.
Кил-ха, мăр-мăрăм, ачашлам,
Йăвашлатам чун кăвайтне.

Антонида САУШКИНА.
Лениногорск районě, Çěнě Шешкел.

«АЙ, ТУР, ТЕЛЕЙЛЕ ЭСИР...»

«Телей, телей!» — тетпěр. Ăçта-ши вăл? Мěн тěслě-ши? Мěнле куçпа пăхмалла-ши, мěнле хăлхапа итлемелле-ши ун çинчен калакан сăмахсене, мěнле алăпа тытса çупăрламалла-ши ăна? Тата кěтмен çěртен сиксе тухмасть-и? Вăт ăçта пырса тухрăмăр çак чăнах та ахăр саманара — курманнине куратăн, илтменнине илтетěн. Йěркипех каласа парам-ха.

Пěр вырсарникун пирěн Кивě Вăрмар ялěнче пурăнакан кукамай патне каçалапа çап-çамрăк каччăпа хěр пырса кěреççě. Иккěшě те çав тери капăр тумланнă. Куçěпичěсем те йăл кулса кăна тăраççě. Тата ăçта-тăр питě те васканăн туйăнать, ларатăра пěлмеççě хăйсем. Мěн тăвăн, яшкěрěм вěт ялан çилçунатлă.

— Пирěн килес, Татьяна Ананьевна, — пуçлать сăмахне чиперкке. — Сирěн сад пахчи чаплă иккен. Çăтмахри пек панулмисем таçтан аякран илěртеççě. Сывлăхăр мěнлерех? Аванах пуль?

— Чиперех-ха, — кěтмен çěртен килсе тухнă хăнасене малтанах ним калама апттранипе ват çын тенкел çине ларма сěнет.

— Телейлě эсир, Татьяна мăнакка, — сывлама памасăр пуçлать хăйěн сăмахне каччи те, — шăпа енчен телейлě.

— Телейлě пуль. Ачамсем манмаççě, килсех тăраççě Хусантан. Тăхăрвуннă тултаратăп килес çул. Ěнтě тем те куртăм пурнăçăмра. Ялан ыр çынсемпе пěрле эпě, Турра шěкěр, — Татьяна Ананьевна Львова савăнăçлă сăмахне малалла тăсать: — Сире те ыр сăмахăршăн тав. Кам пулатăр? Паллаймарăм-ха...

— Эпир Вăрмарта ярмăркка ирттеретпěр. Çитес эрнере палăртнă. Парнесем валеçсе çÿретпěр. Виç килте пултăмăр ěнтě. Ăнăçлă тухрě ěçěмěр. Эсир ятлăсумлă çын иккенне те пěлтěмěр çавсем урлах. Акă сире утюг, акă вěр-çěнě çатма... «Тефаль» теççě, куça уçса хупиччен апат хатěрлеме пулать, ним те çыпçăнмасть, — каччи пакечěсене уçса пырать, хěрě парнесене Татьяна Ананьевăна аллинченех тыттарать. — «Нептун» ятлă фирмăра ěçлетпěр эпир. Спонсорсем тÿлевсěрех парас терěç сире. Телейлě эсир, çав тери телейлě. Сывлăхлă пулăр малашне те.

Пирěн кукамай тата та хытă тěлěнсе каять. Мěнле капла пěр пус укçасăр? Тěлěкре мар-и? Халиччен çакнашкал илемлě, паха таварсене укçасăр илсе курманччě. Ытла та ыр кăмăллă çынсем пур иккен çак çутă тěнчере. — Ачасем, эпě сире килти сăрапа сăйлам-ха... Нÿхрепрен нумай пулмасть çеç илсе тухнăччě, наччасра кăштах ăшăтса та илěпěр... Ларăр-ха, ларăр, канса илěр пăртак, ывăнтăр пулě?

— Ан пăшăрханăр, мăнакка, — алне сулчě хěрě каччи çине ăшшăн пăхса илсе. — Вăхăчě сахалтарах пирěн, парнесене паянах валеçсе пěтермелле.

— Çапла пуль те... Аван мар мана, ват çынна. Ытла хаклă-тăр сирěн парнесем. Чăнахах укçасăрах-и? Шанасах та килмест те. Юрě эппин...

— Спонсорсем питě те лайăххисем. Тата сирěн упăшкăр вăрçăра вилнě, ма тăлăх карчăка пулăшас мар? Чăнахах та эсир телейлě, Татьяна Ананьевна.

Пирěн кукамай çухалсах кайма пуçланă. Спонсорсем, спонсорсем... Сенкер экран умěнче ларнă чух рекламăсенче илтнě те-ха вěсем çинчен, анчах хăйсене курма, вěсемпе тěл пулса чуна килентериччен каласма халиччен тÿр килмен.

— Спонсорсене манăн мěнле тав тумалла, ачамсем? Атьăр, хăть пěр витре панулми илсе кайăр вěсем валли, хăвăр та активсе пăхăр.

Каччи унталла та кунталла пăхса илет.

— Апла мар, мăнакка. Çак таварсем çинчен эсир кÿршě-аршăсене каласа парăр, вěсемпе сăмăл майпа усă курмаллине кăтартăр, пирěн ярмăрккăра вара туянма пултарěç.

Хěрě те тенкел çине ларасшăнах мар.

— Тата пирěн пěртен-пěр... пěчěк кăна пулăшу ыйтмалли пур. Çак таварсене сутнăшăн пирěн налук тÿлемелле. Ячěшěн кăна, нумаях та мар, — чěвěлтетрě вăл. — Ярмăркка пур япала çичě пин ытла тăраççě. Доллар парса туянаççě спонсорсем вěсене. Эсир çичçěр тенкě паратăр та, пире налук тÿлеме çитет те. Ячěшěн кăна. Пенси илетěр вěт-ха, аванах илетěр терěç. Турă сывлăх патăр сире, мăнакка. Парнесене тÿрех илсе кěрсе хурăр, васкатпăр эпир. Çичçěр тенкě çеç, ячěшěн кăна, налук тÿленě...

Ак тамаша! Мěн тумалла халě Татьяна Ананьевнăн? Пенси илнěччě те-ха вăл, анчах утюгě те, ытти парнисем те питех кирлě мар-çке. Халь çулла, ăшă, хěлле, шартлама сивě килсе çитсен, çăматă кирлě пулать. Çěрпÿ пасарěнче йÿнěрех тенине илтнěччě, кÿршě ывăлě те илсе килнě. Ачасем умěнче те аванах мар, ватăсене кăшт та пулин пулăшу парас тесе тăрăшса çÿреççě-çке, епле ăнланас мар?

Тен, пирěн кукамай хăй кăна пěлекен вырăна тěксе хунă укçине илсе те тухнă пулěччě-и — вăл çенěке кěрсенех кÿршěсен ывăлě Володя калинккерен килсе кěчě. Хěрпе каччă, тÿрех каламалла, шарт сиксе ÿкмерěç. Володя вěсене сывлăх сунчě:

— Мěнле çăмăлпа эсир? Татьяна Ананьевна кирлěччě мана, пахчара-и вăл?

— Пахчара мар, кунтах-ха эпě! — илтěнчě çенěкрен сасă, — сан аллă тенкěлěххи çук-и, вакласа памалла та... Ыран Вăрмарта ярмăркка пулмалла. Те туянмалла ěнтě çак утюга, кěр-ха пÿрте, кěр, Володя.

Володя çакнашкал утюг çичçěр тенкě мар, виççěр те тăманнине çавăнтах чухласа илчě. Тата мěнле ярмăркка Вăрмар поселокěнче? Нимле сас-хура та тухман ун пирки. Юлташěсенчен те пěр сăмах илтмен вăл. Мěнле çынсем çак çамрăксем?

Татьяна Ананьевна килкартишне тухиччен Володя сутуçăсене тěрěслесе те илчě. Лешсем сывпуллашмасăрах тăкăрлăкалла тухса шурěç. Татьяна Ананьевнăна ирěксěрех аллисене кăкăрě çине хурса тарăн шухăша путма тÿр килчě.

— Ай, Турă! Нимле намăс та çук вěсен, тăр кăнтăрла мăшкăлласа çÿреççě. Пěлменччě халиччен эп ытлашши телейлě иккенне, пěлтěм халь, ултавçăсен серепине лексен. Эс килсе тухман пулсан, шăхăртса каятчěç укçана.

Çав кунах хěрпе каччă, аферистсем, темиçе киле кěрсе ваттисене те, ыран-паян авланма шут тытнă йěкěте те, отпуска килнě шахтера та «телей парни» парса хăварнă.

...Шанатпăр-çке эпир çынсене. Пěрпěрне шанмасан, кашни ултавçă тесе шухăшласан питě те кичем курăнать тата пурнăç. Тата ма-ха сутуçăсенчен документěсене ыйтмалла мар? Пěр курман-пěлмен сăмахěсене ăшă çил ытамě пек йышăнатпăр. Кайран çеç хамăра улталаса хăварсан «Эх, чавса çывăх та, çыртма çук» тесе кулянатпăр. Пасар тапхăрěнче пурăнатпăр вěт, «дикий рынок» текен вăхăтра. Апла пулсан, кашни иртен-çÿрекене хăна вырăнне йышăнас марччě.

...Хамăрăн кукамай каланисемех аса килчěç. Ěлěкрех Кавалти пасара купсасем таçтан та пуçтарăннă-мěн. Укçа пулсан тем те туянма май пулнă. Пěр пасар кунěнче икě хěрарăм таракан-хăнкăласенчен хăтăлма эмел туянма шутланă. Пěр сутуçă эмел вырăнне пасара килнě çынсем умěнчех икě хěрлě кирпěче вăш-ваш сěркелесех эмел хатěрленě.

Хěрарăмсем кирпěч хăйăрне черет тăра-тăра туянаççě, анчах пěрин те таракан-хăнкăлисем вилме шутламаççě те.

— Ара, сан эмелěн ним усси те çук, çимеççě ăна таракансем, — тарăхаççě вěсем сутуçа пасарта тěл пулсан. Мěн тумалла? Сутуç хăй ěçне пăрахмасăрах ăс парать хěрарăмсене.

— Эсир сапса кăна патăр пуль. Хăйăра çăварěсенчен тыта-тыта хыптармалла.

Сутуçа хирěç мěн калайăн? Сана ирěксěрлесе сутмасть вěт таварне. Куçупа пăх тинкеререх, сăмсупа шăршла лайăхрах. Кирпěч хăйăрě ăçтан эмел пулайтăр ěнтě! Хамăртан хамăрах ыйтасчě: камсем пулатпăр çакăн хыççăн? Кукамай каларăшле, тăмана тункатисем мар-и?

Петр МИРОВ.